ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

16 (4482) №, 2016, апрель (ака), 28

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ТĔЛПУЛУ

## Шкула офицерсем килсен...



**Вĕсем те хăй вăхăтĕнче çурăм хыçне сумка çакса шкула васкană. Учителĕн ăса вĕрентсе калană сăмахне тимлесех итленĕ. Тĕрлĕ ăмăртăва пĕтĕм чун хавалĕпе хутшăннă, пушă вăхăтра алăран кĕнеке яман. Кашниех Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулас ĕмĕтпе пурăннă.**

Шкултан ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн яшсем çар училищисене çул тытнă. Унтанпа авă шыв-шур нумай юхнă, унчченхи курсантсем халĕ – офицерсем. Чăваш Енĕн хастар çыннисем ĕнтĕ тĕрлĕ хулара пурăнаççĕ, хăйсене шанса панă ĕçе чунтан юратса пурнăçлаççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи Куснарпуçĕнче çуралса ӳснĕ Иван Николаевич Николаев полковник темиçе çул каялла тăван тăрăха килсен тарăн шухăша путнă. «Шкултан вĕренсе тухнăранпа 10, 15, 20 е ытларах çул çитнине яланах паллă тăватпăр. Тахçан пĕрле ăс пухнисемпе тĕл пулса калаçма чăнах та аван. Манăн вара тата пысăк ĕмĕтĕм пур. Пирĕн тăрăхран тухнă çар çынни чылай. Вĕсемпе пĕрле шкулсене çитсе паттăрлăх урокĕсем ирттересчĕ. Çавăн пекех вăхăтсăр пуç хунă салтаксен вилтăприйĕсен умне çитсе пуç таясчĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнă ветерансем патне çитсе курасчĕ», – тенĕ вăл ун чухне.

...Ĕнтĕ «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» организаци йĕркеленнĕренпе нумай çул иртрĕ. Çак çулсенче республикăри кашни районта пулса çамрăксемпе асăнмалăх тĕлпулусемпе ăмăртусем ирттерчĕç чăваш тăрăхĕнчен тухнă офицерсем. Хальхинче те çак тĕллевпех Канаш районĕнчи Шăхасан шкулне çитрĕç вĕсем.

Эрик Васильевич Васильев полковник, Вячеслав Михайлович Ильин полковник, Владимир Ильич Андреев подполковник, Георгий Васильевич Макаров генерал-лейтенант тата ытти хăнан сăмахĕсене тимлесе итлерĕç шкул ачисем.

– Шкул вăл – уроксене вĕрентни çеç мар, ачасемпе ĕçлени, вĕсемпе тĕрлĕ конкурс-ăмăртăва хутшăнса çĕнтерни, таçта тухса çӳрени, пушă вăхăтра ушкăнпа çут çанталăк ытамĕнче пулни, паллă çынсемпе, паттăрсемпе тĕлпулусем ирттерни. Ан тив, кайран темиçе çул иртсен вĕсем парта хушшинче ларнине çеç мар, ытти пулăма та савăк кăмăлпа аса илсе мăнаçланччăр. Пĕрле пуçтарăнсан: «Астăватăр-и, епле хаваслăччĕ шкул пурнăçĕ. Офицерсем те пĕрре мар пирĕн пата килсе паттăрлăх урокĕсем ирттернĕччĕ», – тесе калаччăр, – терĕ Вячеслав Михайлович. – Эпĕ хам та ку шкултах вĕреннĕ. Ун чухнехипе танлаштарсан паянхи шкул капăр. Ачасене мĕн кирли те йăлтах пур. Ӳркенмелле мар, тăрăшса та çанă тавăрса çеç вĕренмелле. Вара çутă ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме пулатех.

*Элиза ВАЛАНС.*

Тема тăсăмĕ 6-мĕш стр.

**Çырăнтару–2016**

2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн

çак хаксемпе:

"ХЫПАРА" – 736,02 тенкĕпе,

"ХЫПАР-эрнекуна" – 338,34 тенкĕпе,

"ТАНТĂША" – 261,84 тенкĕпе,

"ТЕТТЕ" журнала – 145,20 тенкĕпе,

"САМАНТ" журнала 182,94 тенкĕпе

кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ

## Çĕнтерӳçе – телефон




Иртнĕ çул "Тантăш" хаçатпа Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ професси колледжĕ /унччен вăл "Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕ" ятлăччĕ/ «Рабочи профессийĕ ялан хисепре!» конкурс ирттернĕччĕ. Кăçал Ĕç çыннин çулталăкĕ. Ăна халаллăпăр та ĕнтĕ паянхи конкурса.

**Конкурса йĕркелекенсем:** Чăваш Республикин вĕренӳ министерствин Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ професси колледжĕ /Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕ/ тата **«Тантăш» хаçат** редакцийĕ.

Тупăшăва 8-11-мĕш классенче вĕренекенсем, колледжсемпе техникум студенчĕсем хутшăнма пултараççĕ.

**Конкурс тĕллевĕ:** рабочи профессийĕ пирки вĕренекенсен пĕлĕвне анлăлатасси, техника енĕпе ĕçлекен специалистсен ĕç-хĕлĕ пирки халăха каласа парасси, ачасемпе çамрăксенче рабочи профессине суйлас кăмăла чĕртесси, суйласа илнĕ професси вăрттăнлăхĕсене алла илес ĕçре ырă витĕм кӳресси, вĕренекенсен чăвашла литература хайлавĕсем çырас ăсталăхне туптасси.

**Конкурс висĕ номинаципе иртет:**

**1-мĕш номинаци** – «Çамрăк çеç агроном тухрĕ аслă хире» – авторсен çыру ĕçĕсем;

**2-мĕш номинаци** – «Савăнсах паян ĕçлерĕм...» – авторăн социаллă плакачĕ е сăнӳкерчĕкĕсем;

**3-мĕш номинаци** – «Ылтăн алăллă пичче хитрелетрĕ унична» – автор презентацийĕсем.

Кашни номинацире висĕ çĕнтерӳçĕ пулĕ. Сирĕн тăрăхра рабочи профессийĕпе тăрăшакан пурах. Мĕнпе уйрăлса тăрать вăл ыттисенчен? Мĕншĕн асăннă профессие суйланă вăл? Шăпах вĕсем пирки хăвăр ĕçĕрсене журналистикăри /эссе, очерк, тĕрленчĕк/ е литературăри /калав, сăвă, пĕчĕк поэма/ жанрсемпе çырса кăтартмалла. Ĕç калăпăшĕ - 12 пунктпа, Arial Cyr Chuv гарнитурăпа А-4 хут çинче пичетленĕ 2 страница пулмалла.

Фотографи тусĕсем! Сирĕн "Производство портречĕ", "Фоторепортаж", "Фотоочерк" фотожурналистика жанрĕсене лайăх пĕлмелле, фотокомпозици саккунĕсене чухламалла. Социаллă плакат хайланă май Adobe Photoshop, ACDS, программăсене пĕлни кирлĕ. Фотофайлсене конкурса JPEG форматпа ярса памалла.

Пĕр-пĕр рабочи профессийĕ çинчен калакан презентацири сăнӳкерчĕксемпе текст конкурса хутшăнаканăн хăйĕн пулмалла. Презентаци 10-15 слайдран кая мар тăратмалла. Презентаци геройĕ кам пулнине, ăçта тăрăшнине пĕлтерĕр, унăн ĕçри çитĕнĕвĕ çинчен калăр.

Конкурсантсен ĕçсене çак адреспа ямалла: **428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, дом 17, с пометкой «На конкурс «Быть рабочим – почетно!».**

Электрон адреспа та яма юрать: **chmtt@list.ru**

Çырура хăвăр çинчен кĕскен каласа пама, сыхăнмалли адресăра тата телефон номерне кăтартма ан манăр.

**Ыйтса пĕлмелли телефон:** 8-/8352/-63-15-13.

Хатĕр ĕçсене кăçалхи **çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕччен** йышăнаççĕ. Конкурса **çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче** пĕтĕмлетеççĕ. Чыслав Шупашкарти Н.В. Никольский ячĕллĕ професси колледжĕнче иртет.

Конкурс координаторĕсем: Анатолий Серафимович Абрамов, Раççей журналисчĕсен Союзĕн членĕ, ЧР журналисчĕсен Союзĕн С.В. Эльгер премийĕн лауреачĕ, Галина Яковлевна Казанова, колледжри ятарлă дисциплинăсен преподавателĕ.

Çĕнтерӳçĕсене Дипломсемпе асăнмалăх парнесем кĕтеççĕ. **Тĕп парне** - кĕсье телефонĕ. Хавхалантармалли парнесем те хатĕр. Унсăр пуçне конкурса хутшăннă кашни вĕренекене тата ăна ăмăртăва хатĕрленĕ вĕрентекене Хисеп хучĕ е сертификат парса чысласçĕ. Çĕнтерӳçĕсен ĕçĕсене «Тантăш» хаçатра пичетлеме палăртнă.

Республика конкурсĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе кăтартăвĕсене Шупашкарти Н.В. Никольский ячĕллĕ професси колледжĕнчи /"Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕнчи"/ «Реклама» специальноçпе тӳлевсĕр вĕренме кĕнĕ чух /2017-2018 вĕренӳ çулĕ/ шута илеççĕ. Эппин, васкăр, туссем!

## Эп лартнă çуртсен чӳречисенчен те хĕвел кĕрĕ-ха



Вăрман çине хĕвел анать. Хутса янă кăмака пек çунать вăрман çийĕ, шартлатса кăвар сирпĕтессĕн туйăнать. Сарăлса, хĕрелсе пырать каçхи шуçăм. Унăн çути Кĕтне çине тăкăннă, çӳллĕ çыранри йăмрасене, анатри кĕпер çийне пĕветнĕ.

Утать Кĕтне хĕррипе Артем. Пĕлтĕр çулла пулă лайăх кĕнĕ вырăнсенче тăп чарăнать, çилпе хумханакан шыва хавасланса пăхать.

– Кăçал та килтисене пĕве кучченеçĕпе савăнтарăп-ха. Пысăк пуллисене çатмара ăшалăп, вăтаммисене типĕтме çакăп, пĕчĕккисемпе вара кушаксене хăналăп. Эх, пулă шӳрпи мĕне тăрать тата! Çисе тăранма çук тепĕр чухне, – каласçрĕ арçын ача хăй тĕллĕн.

Аякран, ял енчен ĕне мукатни ăна çак шухăш авăрĕнчен самантрах айккинелле пăрса ячĕ.

– Çуркуннене кам юратмĕши? Авă, вылйăх-чĕрлĕх те уя тухассишĕн макăрать. Кайăккĕшĕк те кунĕпе юрă шăрантарать. Йăлтах хĕвел ăшшине пула çутçанталăк чĕрĕлет-çке. Çапла, пурте юратаççĕ хĕвеле, – йăл кулса тӳпенелле тинкерчĕ арçын ача. – Акă кĕçех тавралăх тĕттĕмленĕ те çĕнĕ кун пуçланĕ. Каллех, каллех сарă хĕвел ташласа тухĕ. Эпĕ ӳссен строитель пулăп. Ун чухне те манăн аллăмсемпе хăпартнă çурт кантăкĕсенчен те хĕвел çути кĕрсе халăха чунтан савăнтарĕ.

Вĕренӳре «4» тата «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыракан Артем Хованский тĕрлĕ ĕмĕтпе хавхаланса пурăнать çав. Амăшне пулăшмашкăн ĕне сума, йывăçран каскаласа хитре сĕтел-пукан тума вĕренесшĕн, чаплă строитель пуласшăн...

– Аппапа пичче пек шкултан çеç аван вĕренсе тухасчĕ. Ытти – йăлт хам алăра. Авă пĕлӳ çуртĕнчен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă Ксюша аппа тухтăра вĕренет, Дима пичче вара – строителе. Вĕсем студент пурнăçĕ пирки каласа парсан хамăн та хăвăртрах аслă пĕлӳ илес килет, – паллаштарать арçын ача хăйсен туслă çемйипе.

Саккăрмĕш класра вĕренекен Артем Хованский халĕ çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтет. Ун чухне тин вăл кăмăлĕ туличчен юлташĕсемпе вылĕ, вăлта йăтса час-час пулла çӳрĕ.

– Маншăн çуллахи кун ирирех тăваттăра тăрасси ним те мар! Киле витре тулли пулăпа таврăнасси – чи пысăк ĕмĕтсенчен пĕри. Эх, хăвăртрах çитчĕр çеç çав асамлă кунсем, – ĕмĕтленет харсăр арçын ача.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***
Вăрмар районĕ,
Шăхаль шкулĕ.

## Ашшĕ-амăшĕн шанчăкĕ



Çут çанталăка юратакан ача – ырă чунлă, унăн чĕринче чечексем ешереççĕ, кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Çиччĕмĕш класри Рома Алексеев пирки те çавнах каламалла. Тăван тавралăхăн кашни йывăç-курăкне ыталама хатĕр вăл, чĕрчунсем çине те ăшă куçпа пăхать. Хăй лартнă йывăçсене вара ачашласах ӳстерет. Çавăнпах пуль шкулта та биологи предметне питĕ юратса вĕренет. Çак предметпа район олимпиадине хутшăнса кăçал иккĕмĕш вырăна тухнă.

Рома спортпа та туслă. Кунта вĕреннĕ Совет Союзĕн Геройĕ Николай Степанович Ижотов ячĕпе çулсеренех çăмăл атлетика кросĕ иртет. Унта арçын ача тăтăшах лайăх кăтартупа савăнтарать. Сывлăхне çирĕплетсех тăрать-çке вăл, пушă вăхăт тупăнсанах юлташĕсемпе чупма çӳрет, çакă çитĕнӳ тума пулăшать те.

Чылай арçын ачан киленĕçĕ пĕр пекрех – техника. Килте трактор, машина, мотоцикл та пулнăран Рома мĕн пĕчĕкренех вĕсем патне туртăнать.

– Техника та чĕрĕ чун пекех, унпа ăшшăн калаçмалла, типтерлĕ тытмалла, – тет арçын ача.

Тепĕр тесен йывăç-курăкпа тата техникăпа çеç туслă мар вăл. Чи çывăх юлташĕсенчен пĕри – пĕрле вĕренекен Аня. Ăна питĕ хисеплет Рома.

– Чăн-чăн тусăн усала вĕрентмелле мар, манран кăшт ăслăрах та пулмалла. Аня çавăн пек, – тет шухăшлăн.

Рома нумай та калаçмасть, анчах кашни сăмахĕ – чунран тухнăскер. Ахаль сӳпĕлтетекенсене кăмăлламасть вăл, кашни сăмахăн хăйĕн вăйĕ пуррине ĕненет.

Çакăн пек маттур, пултарулла, тăрăшулла ачапа çывăх çыннисем савăнса кăна пурăнаççĕ ĕнтĕ. Çăматă йăвалакан амăшне те калăп туса пулăшать-çке вăл. Ашшĕ пек тракторист пулса пурнăç йĕркелесшĕн. Курăр, епле шанчăклă ывăл ӳсет!

***Лариса ПЕТРОВА.***
Çĕрпӳ районĕ, Ямаш шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1265 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1421
Пичете ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче ală пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# «Çар открытки» акцие хутшăнăр!

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернĕренпе 71 çул çитнине халалласа республикăри ачасемпе çамрăксен библиотеки ака уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 9-мĕшĕччен «Çар открытки» акци ирттерет.**

Кăмăл тăвакансем пурте акцие хутшăнма пултараççĕ. Çакна валли хăвăр алăпа уяв открытки хатĕрлемелле те вырăнти ача-пăча библиотекине илсе пымалла. Открытка питне кирек хăш технологие /ўкерчĕк, аппликаци, калăпăшлă ўкерчĕк тата ытти те/ пăхăнса А5 форматпа ăсталама юрать. Открыткăн тепĕр енче ветерана халалласа алăпа салам тексчĕ çырмалла; çавăн пекех хăвăр хушамата, ята, миçе çултине тата ăçта пурăннине палăртмалла.

Чи лайăх открыткăсемпе вăрçă ветеранĕсене тата тыл ĕçченĕсене уяв мероприятийĕсен вăхăтĕнче библиотекăсенче е киле пырса саламлĕç.

Шупашкарта пурăнакансем ăсталанă открыткăсене çу уйăхĕн 8-мĕшĕччен республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинчи таврапĕлўпе наци литературин уйрăмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: **Шупашкар, И.Яковлев проспекчĕ, 8а çурт.**

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: **/8352/52-37-22 /Татьяна Федоровна Захарова/, 52-02-00 /Татьяна Николаевна Миронова/.**



# Эпир туслă, мал ĕмĕтлĕ, хастар та маттур



Ишек шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен ачасем тахçанах хăйсемпе паллаштарасшăнччĕ. Вăхăт тупса çаврăнса çитрĕмĕр Чăваш тĕнчишĕн хавхаллă тăрăха. Калаçăва пуçлама Лилия Геннадьевна класс ертўçине ыйтрăмăр. Малтан ăна сăмах.

– Пирĕн класра пилĕк хĕрача тата пилĕк арçын ача. Отличниксем иккĕн: Анжела Иванова тата Андрей Дмитриев. Лайăх вĕренекенсем – Алексей Андреев, Виктория Романова, Дмитрий Матвеев, Никита Кузьмин. Ачасем пурте питĕ маттур, хаваспах шкулти драма кружокне çўреççĕ. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче районти конкурсра «Пахчаçăв ывăлĕсем» инсценировкăпа «Чи лайăх декорацие костюмсем» номинацире палăртăмăр. Никита Кузьмин ватă пахчаçă сăнарне питĕ ĕненмелле калăпларĕ.

Урăх кружоксене та çўреççĕ 4-мĕшсем, ăсталăхне тĕрлĕ енлĕн туп-таççĕ, аталантараççĕ. Лолита Трофимова юрлама ăста, Денис Петровпа Алеша Андреев ташă ушкăнĕнче палăрнă. Çак ачасем районти тата республикăри пултарулăх конкурсĕсенче шкул ячĕсне тивĕçлĕн хўтĕлеççĕ. Кристина Тятькова, Анжела Иванова, Дима Матвеев сăвă-калав çырма килĕштереççĕ, хитре ўкереççĕ. Женя Деревцова амăшĕпе пĕрле алĕçĕ тума маçтăр.

Вĕренекенсем спортпа та туслă. Йĕлтĕрпе ярăнаççĕ, çăмăл атлетика ăмăртăвĕсене хутшăнаççĕ. Андрей Дмитриев уйрăмах пысăк çитĕнўсем тăвать. Кире пуканĕ йăтаканĕсен республика шайĕнче иртекен Геннадий Калинин интернационалист салтак ячĕллĕ турнира та хутшăнчĕ вăл, Хисеп грамотине тивĕçрĕ.

Ачасем ялти библиотекăпа туслă. Кĕнеке вуланисĕр пуçне вĕсем тĕрлĕ мероприятие хутшăнаççĕ. Литература çулталăкĕнче ирттернĕ викторинăсенче тата ўкерчĕксен конкурсĕнче те палăрчĕç вĕренекенсем. Лолита Трофимовăпа Виктория Романова уйрăмах хастар пулчĕç.

Ашшĕ-амăшĕ те час-часах шкулта пулаççĕ. Пирĕнпе пĕрле походсене те çўреççĕ. Вĕренўре кирлĕ япаласене туянма та пулăшаççĕ.

*Лилия АЛЕКСАНДРОВА,*
*класс ертўçи.*

**«Тантăш» тусĕсене Ишек шкулĕн маттурĕсемпе çывăхрах паллаштарма класа виçĕ ушкăна пайларăмăр та кĕске тĕрленчĕксем çырма хушрăмăр.**

**Кристина Тятькова, Дмитрий Матвеев, Никита Кузьмин 1-мĕш класа кайнине аса илчĕç.**

– Авăнăн 1-мĕшĕнче тăватă çул каялла шкула утнă чух çумăр çăватчĕ. Шкула çитрĕмĕр. Унта темĕн чухлĕ ача пуçтарăннă. Эпир кăштах вăтантăмăр та. 1-мĕш класра эпир тăххăрăнччĕ. Хамăр вĕрентекене – Лилия Геннадьевнăна – хитре чечек çыххи парнелерĕмĕр. Пĕлў урокĕ хыççăн алфавит, саспаллисем çырма вĕренме тытăнтăмăр.

Эпир вара – Кристина Тятьковăпа Дмитрий Матвеев – 1-мĕш класра Çатра Маркари шкулта вĕреннĕ. Ишек шкулне 2-мĕш класранпа çўретпĕр. Кунта килсенех малтан именеттĕмĕр. Часах ачасемпе туслашрăмăр та ĕмĕр тăршшĕпех кунта вĕреннĕн туйăнма тытăнчĕ.

**Андрей Дмитриев, Денис Петров, Лолита Трофимова, Алексей Андреев класс биографине кăштах çутатса парас терĕç.**

– Мĕн кăна пулса иртмен тăватă çул хушшинче. Аса илмелли нумай. Класĕпе Кўкеç поселокĕнчи «Бичурин тата хальхи самана» музея кайса курнăччĕ. Питĕ килĕшрĕ: Иакинф атте пурнăçĕпе кăна мар, Шупашкар районĕн историйĕпе те паллашрăмăр унта. Ишек музейне вара тăтăшах çўретпĕр. Вăл пирĕн шкултан аякрах та мар.

Чĕрчунсемпе мĕнле кăсăклă ĕçсем пулса иртнĕ пирĕн! Эпир хĕлле класра уйăп усрарăмăр. Пирĕн шкул умĕнчех чутах шăнса вилмен вăл. Сыватрăмăр – çунат сарчĕ илемлĕ кайăк. Пĕррехинче вара Лилия Геннадьевна пире чĕрĕ раксем илсе килсе кăтартрĕ. Вĕсене класрах хăвартăмăр, шыв тултарнă банкăран питĕ тимлĕн сăнарĕç вĕсем. Килĕштерчĕç пулмалла пире. Тепĕр кунне вара хачăллă-майăхлă туссене Ункă çырмине кайса ятăмăр. Тен, малашне унта раксем йышлăн ĕрчĕç?

Тепрехинче Женя Деревцова амăшĕ пирĕн пата кролик илсе килчĕ. Питĕ хитреччĕ вăл – хăмăр-хĕрлĕ тĕслĕччĕ, лавккари çемçе пукане пекех. Вăрăм хăлха пире часах хăнăхрĕ, хăрами пулчĕ. Ачасем унпа кăмăл туличчен вылярĕç. Кайран вара эпир ăна килне леçсе ятăмăр.

Эпир – спорта кăмăллакансем. Хĕлле пурте ГТО нормисене пурнăçларăмăр. Кашни çулах «Наци кросне» хутшăнатпăр. Республикăри тантăшсене те спортпа туслă пулма хушатпăр.

Класри юлашки хыпарсенчен пĕри Лолита Трофимовăпа çыхăннă. Нумаях пулмасть вăл Александр Витальевич Пушкин ертсе пынипе Шупашкарти культура училищинче иртнĕ республикăри пултарулăх конкурсне хутшăнчĕ, «Бу-ра-ти-но!» юрăпа халăха савăнтарчĕ.

**Кашни çыннăн пурнăçĕнче пĕрремĕш вĕрентекен ĕмĕрлĕхех асра юлать. Виççĕмĕш ушкăнри Женя Деревцова, Анжела Иванова тата Виктория Романова «Тантăш» тусĕсене иккĕмĕш амăшĕпе паллаштараççĕ.**

– Лилия Геннадьевна пирĕншĕн чунне парса тăрăшать. Мĕнле кăна пулăшмасть – сăвă калама та вĕрентет. Хушăран Лилия Геннадьевна çирĕп кăмăлне те кăтартать, çирĕп ыйтакан вĕрентекен вăл. Çав вăхăтрах питĕ ырă кăмăллă, ăслă, ăнлануллă, пире анне пекех пăхса тăрать. Ачасен мĕнле те пулин ĕç тухмарĕ-тĕк – питĕ пăшăрханать, пулăшма яланах васкать.

Лилия Геннадьевна пире вулама, çырма, шутлама, тантăшсемпе туслашма, çут çанталăка ăнланма вĕрентрĕ. Унăн тăрăшулăхне тата ĕçченлĕхне пула олимпиадăсенче, ăмăртусенче малти вырăнсене тухатпăр.

Хамăрăн пĕрремĕш учительницăна эпир питĕ юрататпăр, унпа мухтанатпăр.

Килес вĕренў çулĕнче 5-мĕш класа каякан **маттурккасене «Тантăш» хаçат çирĕп сывлăх, ăнăçу-çитĕнў сунать.**

**Сăнўкерчĕксенче:**

1. Эпир 1-мĕш класра: 2012 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ.
2. Эпир 4-мĕш класра: 2016 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕ.

Сăнўкерчĕке мĕнле сăрт çинче ўкернине вара каламасан та юрать, пирĕн хаçат тусĕсем тўрех тавçăрса илчĕç пуль?

***Владимир СТЕПАНОВ.***

КОНКУРС ПĔТĔМЛЕТĔВĔ

# Шкул пики



**Трактор тăвакансен культура керменĕнче «Шкул пики – 2016» республика конкурсĕ иртрĕ. Малтан хула шайĕнче çеç йĕркеленĕскер кăçал пуçласа çак шайра пулчĕ.**

Конкурса ЧР Культура министерствин «Трактор тăвакансен керменĕ» халăх пултарулăхĕн центрĕ, «Шупашкарти вĕренӳ ĕçченĕсен «21 ĕмĕр» ассоциацийĕ», Чăваш чĕлхи вĕрентекенсен ассоциацийĕ «Чăваш юрри-кĕвви илемĕ» пултарулăх лабораторийĕ йĕркеленĕ.

Конкурс тĕллевĕсем те пĕлтерĕшлĕ: çитĕнекен ăрăва тăван культурăна, унăн йăли-йĕркине туйма, хаклама вĕрентесси, чăваш чĕлхипе литературинче çитĕнӳсем тăвакан çамрăксене палăртасси, вĕсен пултарулăхне аталантарма пулăшасси.

Пикесене К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн режиссерĕ, Чăваш халăх артисчĕ Иван Иванов, Чăваш наци конгресĕн пайташĕ, 2016 çулхи «Чăваш пики» конкурсĕн дипломанчĕ Олеся Никитина, Шупашкарти вĕренӳ ĕçченĕсен «21 ĕмĕр» ассоциацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕн председателĕ Зоя Лукина, Шупашкарти Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищин аслă категориллĕ вĕрентекенĕ Ирина Яковлева тата «Самант» журнал корреспонденчĕ Нина Царыгина тивĕçлĕн хакларĕç.

Ăмăртăва 8-9-мĕш классенче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Малтанах вĕсем /1-мĕш тапхăрта/ йĕркелӳ комитетне хăйсем çинчен калакан видеоролик ярса панă, чăваш юррине юрланă. Тӳресем чи пултаруллисене 2-мĕш тапхăрта тупăшма суйласа илнĕ.

Пикесем чылай конкурс, тĕрĕслев витĕр тухса хăйсен пултарулăхне тĕрлĕ енлĕн кăтартрĕç. Чăваш халăх юррине юрласа, тутлă апат-çимĕç хатĕрлесе, тăван халăх йăли-йĕркипе çыхăннă ыйтусене тĕрĕс те туллин хуравласа, алĕçĕ пурнăçласа та тупăшрĕç. Пĕри тепринчен хастартарах та тăрăшуллăрах пулчĕ.

Конкурс йĕркипе, хĕрсене икĕ ушкăнра – хула шкулĕсенчи тата республика шкулĕсенчисене уйрăммăн хакларĕç. Икĕ ушкăнра та сакăршар пике. Вĕсем пурте тĕрлĕ номинацие тивĕçрĕç. Хула шкулĕсенчен килнĕ хĕр-упраçран Ульяна Самохина /Шупашкар, 4-мĕш гимнази/ – «Хӳхĕм пике», Александра Николаева /Шупашкар, 2-мĕш шкул/ – «Çепĕç пике», Ирина Андриянова /Шупашкар, 43-мĕш шкул/ – «Ăста пике», Карина Антонова /Шупашкар, 50-мĕш шкул/ – «Хитре пике», Мария Васильева /Шупашкар, 55-мĕш шкул/ – «Сăпайлă пике» номинациллĕ пулчĕç. «Шкул пики – 2016» сумлă ята вара Етĕрне хулинчи 3-мĕш шкулта вĕренекен Екатерина Еремеева çĕнсе илчĕ. 2-мĕш – Татьяна Филиппова /Шупашкар, 35-мĕш шкул/, 3-мĕш вырăна Анастасия Мочалова /Шупашкар, 40-мĕш шкул/ тухрĕç.

Республика шкулĕсенчен килсе çитнĕ чиперуксенчен Арина Галкина /Комсомольски районĕ, Хирти Явăш шкулĕ/ – 1-мĕш, Алевтина Григорьева /Çĕрпӳ хули, 2-мĕш вăтам шкул/ – 2-мĕш, Ева Семенова /Етĕрне районĕ, Тури Ачак шкулĕ/ – 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç. Ыттисем те илемлĕ ятсене тивĕçрĕç.

Пĕтĕмлетӳ хыççăн çĕнтерӳçĕпе те кăштах паллаштарар. Арина Галкина тăххăрмĕш класра вĕренет. Пĕчĕкренех юрă-ташă тĕнчине иленнĕ вăл. Çак енĕпе тĕрлĕ тупăшăва хутшăнать, республикăри «Мехел» конкурса хутшăнса та палăрнă. Паян Арина тăван тăрăхĕнчи «Хурамаран пĕкĕ аврăм» халăх юррине тӳресемпе куракансен умне тăратрĕ. Çепĕç те янăравлă сасăллăскер ăна чунтан шăрантарчĕ.

Наци апат-çимĕçĕпе паллаштармашкăн Арина хуплу янтăласа килнĕ. Ăна хатĕрлеме пикене кукамăшĕ сĕнӳ-канашпа пулăшнă-мĕн.

– Паянхи конкурсра çĕнтерӳçĕ пуласси çинчен ĕмĕтленменччĕ те эпĕ. Халĕ чунра питĕ савăнăçлă. Малашне те тĕрлĕ тупăшăва хутшăнас туртăм çирĕпленчĕ, – пайларĕ шухăшне пултаруллăскер.

Тӳре членĕсем конкурс аван иртнине палăртрĕç. «Паян малти вырăна тухнă шкул пикисене Раççей шайĕнчи фестивальсемпе конкурссене хутшăнтарма та намăс мар. Çавнашкал мелсем тупма тăрăшмалла та», – палăртрĕ Иван Иванович хĕрупраçăн пултарулăхне хакланă май.

«Чăваш юрри-кĕвви илемĕ» пултарулăх лабораторийĕн ертӳçи Светлана Вячеславовна Тяхмусова пикесемпе ашшĕ-амăшне тата вĕрентекенсене тав сăмахĕ каларĕ. Чăваш чĕлхипе çыхăннă тупăшусене ытларах хутшăнма сĕнчĕ.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

СПОРТ

# Анне шанăçне пурнăçласчĕ

***«Пултарулăха Турăран кĕтсе ан ларăр, ăна хăвăрăн туптамалла», – вĕрентет пире анне. Сăмахăм вĕренӳре те, спортра та çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвакан Лиана Васильева пирки.***

Лиана шкулта «тăваттă» тата «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренет. Истори, обществознани предмечĕсене ытларах кăмăллать. Чăваш чĕлхипе физкультура урокĕсем – чи юратнисем. Чăвашла таса та илемлĕ калаçакансене вырăс шкулĕнче вĕренме пĕрре те йывăр мар. Лиана кашни çулах чăваш чĕлхипе тата литературипе, тăван ен культурипе иртterекен олимпиадăсенче малти вырăнсем йышăнать. Сăвăсем шăрçалама, юрлама та юратать маттурскер.

Пĕчĕк чухне Лиана ашшĕ-амăшĕпе ялта пурăннă. Шкула кайнă чухне çул çине тухма виçĕ-тăватă çухрăм утмалла пулнă. Утнă чухне утса, чупнă чухне чупса çула кĕскетнĕ çапла майпа. Амăшĕ, Наталья Олеговна, хăй те ача чухнех спортпа туслашнă. Именчĕклĕхне пула ăмăртусене кайма шикленнĕ. Халĕ хĕрне хастарлăхпа хăюлăха хăнăхтарма тăрăшать. Ашшĕн куккăшĕ, Михаил Степанович Степанов, пурнăçне спортпа çыхăнтарнă. Çĕрпӳ районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче 1932 çулта çуралнă вăл. Бокс енĕпе РСФСР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ. Вăл пурĕ 15 спорт мастерне анлă çул уçса панă. Çакăн пек йăхра, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе мăнаçланса çитĕнет те ĕнтĕ Лиана.

Хĕрача шкулти пĕр ăмăртуран та юлмасть. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне пĕрремĕш хут кроса тухнă. Хăйĕнчен икĕ çул аслăраххисенчен иртсе финиша пĕрремĕш çитсессĕн, амăшĕ мĕн тери савăннă хĕрĕшĕн. «Эпĕ хамăн ĕмĕте ытлашши сăпайлă, айван пулнишĕн пурнăçлаймарăм. Эсĕ вара малалла та тăрăш…» Амăшĕн çак сăмахĕсем яланлăхах пуçра юлнă. Çакăн хыççăн хăй тĕллĕн тренировка хыççăн тренировка ирттерме пуçланă.

Ăмăртусенчен çĕнтерӳпе таврăнакан хĕрачана Евгений Владимирович Солоденов тренер та асăрхама тытăннă, «Асамат» физкультурăпа сывлăх комплексне чĕннĕ. Лиана чи малтанах шикленнĕ, анчах амăшĕпе калаçнă хыççăн шиклĕх туйăмĕ пачах сухалнă. Пĕр иккĕленмесĕрех пысăк çитĕнӳсем тума спорт алăкне уçнă. «Йăлтах пĕчĕк-пĕчĕк



утăмсенчен пуçтарăнать», – ăнăçу вăрттăнлăхне уçать хĕрача.

Республикăри çамрăк армеецсен «Орленок» тата «Зарница» спорт вăййисенче çĕнтерне Çĕрпӳ шкулĕн ушкăнĕ тăхăр хутчен ытти хулари ăмăртусене хутшăннă, малти вырăнсене тухма пултарнă.

Юлашки икĕ çулта пирĕн шкул вĕренекенĕсен ушкăнĕ каллех çĕнтерӳçĕ ята тивĕçет. Вĕсен йышĕнче Лиана та пур. Çăмăл атлетикăра хĕрача пилĕк медале тивĕçнĕ: пĕр ылтăн, 2 кĕмĕл, 2 пăхăр.

Саккăрмĕш класран вĕренсе тухсан Лиана хăйĕн пурнăçне спортпа çыхăнтарма шухăшлать. Çавна май Шупашкарти Олимп резервĕсен шкулне вĕренме каять. Çĕнтерӳ çăмăллăн пулмасть. Нумай тăрăшмаллине туять хĕрача. Амăшĕн шанчăкне тӳрре кăларма тăрăшать.

Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Васильевич Силантьев ячĕллĕ пĕрремĕш шкулта вĕренекенсем пирĕн йышра çакăн пек маттур, пултаруллă тантăш пуррипе мухтанатпăр тата мăнаçланатпăр.

«Спортсăр малаш пурнăça курма йывăр», – тет Лиана тĕнчери Олимпиадăна хутшăнса ылтăн медале çĕнсе илсе Чăваш Ене мухтава кăларас ĕмĕтлĕскер.

Ăна çитĕнӳ çеç сунатпăр.

***Елена ИВАНОВА,***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ.***
Çĕрпӳ районĕ,
Çĕрпӳ 1-мĕш шкулĕ.

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС САЛАМСЕНЕ ПĔЛТЕРМЕЛЛИ НОМЕР:
89051975911

Хамăн юратнă мăнукăма **Наташа ХРИСТОФОРОВĂНА** /Вăрмар районĕ, Шутнерпус/ вун ултă çул тултарнă ятпа саламлатăп.

Хĕвелтен ăшăрах,
Çăлтăртан сутăрах,
Ылтăнран хаклăрах,
Пул, мăнукăм, яланах!

Чугун çул пек вăрăм кун-çул, хурçă пек çирĕп сывлăх, нумай лайăх юлташ сунатăп, экзаменсене ăнăçлă тытмалла пултăр.

***Асламăшĕ***
***Валентина ХРИСТОФОРОВА.***

ПРЕЗЕНТАЦИ

# «ТЕНКРИ ХĔÇĔН» хăвачĕ



**Ака уйăхĕн 6-30-мĕшĕсенче Чăваш наци библиотекин пуçарăвĕпе «Кĕнеке урлă – халăхсен килĕшĕвĕ патне» наци кĕнекин регионсен хушшинчи фестивалĕ иртет. Çыравçăсемпе вулакансем поэзи каçĕсене, тĕлпулусене, пултарулăх каçĕсене, çĕнĕ кăларăмсен хăтлавĕсене, кĕнеке тата картина куравĕсене хутшăнаççĕ. «Чăваш кĕнекин кунĕсем» программăпа килĕшӳллĕн Чăваш наци вулавăшĕнче Владимир Степановăн «Тенкри хĕçĕ» роман-этнофэнтезине пахаларĕç.**




## Тăван литературăри çĕнĕ варкăш

Чăваш кĕнеке издательстви çĕнĕ пуçарусене яланах хапăлласа йышăнать. Вулакансем патне пысăк пахалăхлă, интереслĕ те хăйне евĕрлĕ кăларăмсем çитерес тĕлĕшпе тимлесех ĕçлени куçкĕрет. Акă пĕлтĕр Владимир Степановăн «Тенкри хĕçĕ» роман-этнофэнтезийĕн пĕрремĕш кĕнеки /редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Мария Фомирякова/ кун çути курчĕ. Унта «Кăткă йĕнерçи» тата «Тăваçа-Аçтамах» пайсем кĕнĕ. Ку пулăма тăван литературăри çĕнĕ варкăшпа танлаштарсан та йăнăш мар-тăр. Паянхи чăваш çыравçисен хушшинче фэнтези жанрĕпе ĕçлекен автора тупма питех те хĕн.

Владимир Васильевич хăй хайлавне чăваш юмахĕсемпе халапĕсем çине таянса çырнă. Сюжет йĕрне ырăпа усал хирĕçтăрăвĕ йĕркелет. Хĕрӳ çапăçусем Çĕр-анне çинче кăна мар, уçлăхра та пулса иртеççĕ. Тĕп геройсем – Руслан Муравецпа Хăва /ăна çавăн пекех Амират Арикан Умай-пике, Умай-ама, Умай-пике, Елена Троянская, Медуза горгона, Исида тата ытти ятсемпе пĕлеççĕ/.

«Тенкри хĕçĕ» роман-этнофэнтезин иккĕмĕш кĕнеки Чăваш кĕнеке издательствинче кăçал пичетленсе тухрĕ. Кăларăма этнофэнтезин «Хĕвел-куçăм» пайĕсĕр пуçне «Пурăшкасси джентльменĕсем» калавсен ярăмĕ те кĕнĕ. Дилогин юлашки çаврăмĕ вулакана сĕм аваллăха, çеçен хирте пурăнакана хунсем пĕр патшалăха чăмăртаннă саманана, ертсе каять.

Калавсенчи тĕп сăнарсем – Ванюкпа Çеруш – нихăçан та кичемлĕхе парăнмаççĕ. Çĕр айĕнчен ĕмĕрхи серванозавра чакаласа кăларасшăн, тĕнче шайĕнче чапа тухасшăн. Савнă хĕрпе тĕл пулма та Пурăшкасси джентльменĕсем хăйне евĕрлĕ мел суйласа илеççĕ.

## Калаçтарать, тавлаштарать дилоги

«Тенкри хĕçĕ», аслă классенче вĕренекен çамрăксем валли тесе палăртнăскер, çитĕннисене те кăсăклантарать. Ахальтен мар ĕнтĕ презентацие пухăннă чĕлхеçĕсемпе литература тĕпчевçисем, преподавательсемпе журналистсем, прозаиксемпе поэтсем дилогие хĕрӳ сӳтсе яврĕç. Филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Виталий Станьял романпа тĕплĕн, хăйне валли палăртусем тусах, паллашнă-мĕн. Фэнтезие ăс, тĕнче пăтранăвĕ пек хакларĕ Виталий Петрович. Ку пирĕн литературăшăн çĕнĕлĕх пулнине те пытармарĕ. Асăннă жанр кирлĕлĕхĕнче пĕртте иккĕленмест вăл.

Юрий Яковлев литературовед каланă тăрăх, «Тенкри хĕçĕ» массăллă культурăна çывăх тăрать. «Тĕнчере çаврăнакан фантастика хумĕ Владимир Васильевич чунне те кĕнĕ», – терĕ Юрий Васильевич. Хайлавра Çĕр-аннене уйрăм сăнар пек кăтартса панинче те пысăк пĕлтерĕш пуррине систерчĕ тĕпчевçĕ. Анатолий Хмыт çыравçа вара Çĕр-кукамай сăнарĕ тĕлĕнтерне. Ара, чăваш литературинче халиччен ун çинчен çыракан пулман.

Хăш-пĕр вулаканшăн этнофэнтези чĕлхи кăткăсрах туйăнĕ. Анчах ку хăратса ӳкермелле мар. «Вулакана ĕçлеттерни питĕ кирлĕ. Çыравçă çĕнĕ япала калани яланах шухăшлаттарать, такăнтарать. Самана улшăнни те çапларах хайлавсем çырма хистет пуль. Çамрăксем те урăхларах халь. Владимир Васильевич çакна пĕлсе, туйса тăрать», – терĕ филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Юрий Артемьев профессор. Критик асăрхаттарусемпе сĕнӳсенчен те пăрăнса иртмерĕ. Ăна уйрăмах ырăпа усал полюсĕсем ылмашăнни, вĕре çĕленпе вĕри çĕлене уйăрса илме йывăрри, çĕнĕ сăмах нумайăйи шухăша янă.

Мĕнле тĕллев хистенĕ-ха çыравçа яваплă та калăпăшлă ĕçе пуçăнма? Ку ыйтăва Владимир Васильевич çапла хуравларĕ: «Пирĕн культурăра чĕлхе кăна мар, чăваш мифологийĕ те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Шел, унăн витĕмне кирлĕ пек хаклама пĕлместпĕр эпир. Мифологин хăвачĕ вара калама çук пысăк. Çавна кăтартса парасшăнччĕ те эпĕ. Чăваш чĕлхинче динамикăлăха тытса пыма çăмăл мар. Тĕрлĕ мелсем шырама тивет».

Кашни саманан – хăйĕн сăнарĕсем тата ăнтăлăвĕсем. Литература çакна нимрен те аванрах çутатса парать. «Тенкри хĕçĕ» те хăйĕн вулаканне тупасса шанатпăр. Пурнăç тупсăмне тепĕр чухне кулленхи пулăмсенче кăна мар, фэнтези хайлавĕсенче шырасан та пăсăк пулас çук.

**Нина ЦАРЫГИНА сăнӳкерчĕкĕ.**

● КАЛАВ

# Кивĕ кĕнеке

Хĕвел сайрарах пăхрĕ, час-часах тачка пĕлĕтсем хушшине пытанчĕ. Вылянчăк кăмăллă çанталăк – кĕркунне çитнине, янăравлă шăнкăрав вара вĕренӳ çулĕ пуçланнине систерчĕ.

Ваня виççĕмĕш класа куçрĕ. Малтанхи эрнере çуллахи савăк кунсемшĕн тунсăхларĕ паллах. Урокра ларма кичемрех пек туйăнчĕ ăна. Анчах юлташĕсемпе курнăçни, шкулти çĕнĕ хыпарсем сӳрĕклĕхе хăвăртах сирчĕç.

Компьютер вăййисене кĕнекесенчен ытларах юратрĕ пулин те уроксене тĕплĕн хатĕрленчĕ арçын ача. Киле панă ĕçсене пурнăçланă хыççăн кăна виртуаллă тĕнчен ытамне путрĕ. Ун пек чухне хăй тавра мĕн пулса иртнине те асăрхамарĕ.

Хушăран библиотекăна çӳрерĕ Ваня. Вăрçă темипе çырнă, паттăрсен ĕç-хĕлне çутатса паракан кĕнекесем çеç суйларĕ вăл. Кăсăкланса вуланă хушăра пархатарлă сăнарсен вырăнĕнче хăйне курчĕ.

...Пĕринче шкултан иртерех таврăнчĕ Ваня. Ашшĕпе амăшĕ ĕçреччĕ. Асламăшĕ те курăнмарĕ пӳртре. Анчах сĕтел çинчи кукăле тӳрех асăрхарĕ арçын ача. Курткине вăшăл-вашăл хывса çакрĕ те тĕпелелле иртрĕ. Хырăмĕ хытах выçнă-çке унăн. Васкаса чей хатĕрлерĕ те кукăль сăмсине илсе хăй пӳлĕмне кĕчĕ.

«Каçчен вăхăт чылай-ха. Задача шутласа та, сăвă вĕренсе те ĕлкĕрĕп. Кăштах вылям», – шухăшларĕ Ваня. Компьютера çутрĕ те... кĕç пуçĕпех вăййа чăмрĕ. Тутлă кукăль манăçрĕ. Куркари чей сивĕнчĕ.

Пӳлĕм алăкĕ уçăлнине те сисмерĕ Ваня. Ăçтан асăрхайăн. Татăклă çапăçу пырать. Тупăсем шартлатаççĕ, танксем кĕмсĕртетеççĕ, пулеметсем шатăртаттараççĕ, салтаксем кăшкăрашаççĕ.

– Ай-уй, ачам, ку шăв-шавра хăлху мăклансах ларчĕ-им? Кĕнеке макăрнине те илтместĕн-иç, – сăмах хушрĕ асламăшĕ.

Шарт сикрĕ Ваня. Ним ăнланмасăр кăн-кан пăхкаларĕ.

– Мĕнле кĕнеке? – çаплах тăна кĕреймерĕ-ха арçын ача.

– Эх, мăнукăм, сĕтел çинчи кĕнекӳ йĕрет-çке. Эс ун çине кукăль татăкĕ хунă. «Ку ача пачах хисеплемест мана. Кĕпене çупа варапарĕ», – тесе хурланса выртать мĕскĕнскер.

– Хе-хе-хе, шӳтлетĕн те вара, асанне, – терĕ Ваня ахăлтатса, çапах кукăль татăкне кĕнеке çинчен илчĕ. – Ăçтан макăрма пĕлтĕр ĕнтĕ хут? Кĕнеки те кивĕскер кăна. Мĕн пултăр ăна?

– Эх, ачам, ачам, кирек мĕнле кĕнеке те – кивĕ-и вăл е çĕнĕ – хисепе тивĕç. Вăл пĕлӳ çăлкуçĕ пулнине пĕлетĕн вĕт-ха. Ăна пичетлесе кăларас, сан патна çитерес тесе мĕн чухлĕ çын вăй хунă! Кĕнекене типтерлĕ тытманни – вĕсен ĕçне хисеплеменни те.

Ваня аванмарланчĕ, унăн пичĕ вут пек пĕçерчĕ. Хăлхине тĕмпĕл-тĕмпĕл хĕрлĕ тĕс çапрĕ.

– Каçар, асанне. Эп текех апла хăтланмăп, – терĕ арçын ача пуçне пĕксе, чей куркине илчĕ те: – Атя тĕпелте апатланар, – тесе сĕнчĕ шăппăн.

– Вăт маттур, мăнукăм. Ĕçĕн – майĕ, япалан вырăнĕ пур çав.

Ашшĕпе амăшĕ ĕçрен таврăниччен Ваня задачăна та шутласа пĕтерчĕ, сăвва та пăхмасăр вĕренчĕ. Кивĕ кĕнекене вара илемлĕ çĕнĕ хуплашка тăхăнтартрĕ те кăсăкланса вулама пуçларĕ.

1-мĕш стр.



# Школа офицерсем килсен...

## Манăçмаççĕ ветерансем

Ҫĕнтерӳ кунĕ çывхарнăран офицерсем Шăхасанта çуралса ӳснĕ, халĕ Мускаврта пурăнакан Виктор Михайлович Михайлов вăрçă ветеранĕпе скайппа калаçасшăнччĕ. Шел, ветеран чирленине пула ку ĕмĕт пурнăçа кĕреймерĕ.

Вăрçă пуçланнă çулхине Виктор Михайлович шăп та лăп вун çиччĕ тултарнă. Вăл лайăх спортсмен пулнă. Уйрăмах йĕлтĕре килĕштернĕ. Республика чемпионатĕнче те палăрнă хастарскер. Авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче республикăра пурăнакан 500 йĕлтĕрçе Шупашкара пуçтарнă. Ҫав шутра Шăхасан каччи те пулнă. Пурте фронта хăвăртрах тухса каяс ĕмĕтпе хыпса çуннă.

Фронтра пĕрре мар паттăрлăхĕпе палăрнă Виктор Михайлович. Орден, медаль те кăкăр тулли пулнă. Вăрçă хыççăн Ҫарпа политика академине пĕлӳ илме кĕнĕ те унтан ăнăçлă вĕренсе тухнă. 1977-1987 çулсенче генерал-майор Ригăри С.С.Бирюзов маршал ячĕллĕ аслă çарпа политика училищин ертӳçи пулнă.

Ветеран ентеше халалласа Шăхасанти тĕп урама унăн ятне панă.

Шăхасанта хастар ветерансем тата та пулнă. Акă Иван Платонович Платонов аслă сержант «Ҫапăçури паллă ĕçсемшĕн» медале тивĕçнĕ. Хăюллă снайпер пулнăскер тăшмана пĕр шелсĕр тĕп тунă.

Ялта нумай çул клуб ертӳçинче тăрăшнă. Ҫамрăксене сывă пурнăç йĕркине тытса пыма ырă суннă. Хăй те спорта юратнă. Лайăх фотограф пулнăран тĕрлĕ сăнӳкерчĕк тунă, заметкăсем çырма юратаканскер район хаçачĕпе тачă çыхăну тытнă. Хаçатра унăн заметкисем час-час пичетленнĕ. Уйрăмах вăрçăри асаилӳсене çырнă вăл. Чунри ыратăва материалсенче лăплантарма тăрăшнă. Вăрçăра пуç хунă ентешĕсене халалласа чаплă фотоальбом та хатĕрленĕ. 2001 çулта вара ветеран ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

Е тата Николай Алексеевич Алексеев учитель пирки те ыррине çеç калама пулать. Вăл 1941 çулхи çурла уйăхĕнче вăрçă вутне кĕнĕ. Паттăрлăхпа хастарлăхне кура нимĕç эшкерĕсене пĕр шелсĕр тĕп тунă. 1944 çулхине пĕр хĕрӳ çапăçура йывăр аманнă. Хĕрлĕ Ҫăлтăр тата Тăван çĕршыв вăрçин 1-мĕш степеньлĕ орденĕсене тивĕçнĕ.

Тăван тăрăха таврăнсан, хăй суранĕсене пăхмасăр ачасене тарăн пĕлӳ парас ĕçре тăрăшнă. Тĕрлĕ çулта тĕрлĕ шкулсенче директорта та, завуч пулса та ĕçленĕ. Клуб ертӳçинче те вăй хунă. Кирек ăçта та сатурлăхĕпе çеç палăрнăскере ял халăхĕ хисепленĕ. Пурнăçа чун-чĕререн юратаканскер 69 çул тултарсан ку тĕнчерен уйрăлнă.

Вăрçăра пуç хунисене асра тытса пурте пĕр минут шăп тăчĕç.

## Аса килет ачалăх...

Шăхасансем Чăваш чĕлхи эрнине халалласа тата Ҫĕнтерӳ кунĕ çывхарса килнине асра тытса концертпа савăнтарчĕç хăнасене. Чăваш тумĕ тăхăннă ачасем паллă поэтсен сăввисене те илемлĕ вуларĕç. 2 «б» класри Юлиана Кондратьева хăйĕн уçă сассипе «Пуканесем» ятлă сăвва чăн-чăн артист пек шăрантарчĕ.

– Ман çире те сараппан,
Пуканен те сараппан.
Вăл та,
Эп те пушмакпа.
Тĕлĕнсе çынсем тăраççĕ, –
Аннерен вĕсем ыйтаççĕ:
– Вăл та,
Ку та пукане, –
Ăçта сирĕн
Марине?

Ҫак сăвва итленĕ май Вячеслав Михайлович Ильин полковникăн куçĕ умне ачалăхĕ тухса тăчĕ.

– Юратнă вĕрентекене Анисия Александровна Николаевăна пула шкула çӳреме çав тери юрататтăм. Унăн ăшă кăмăлĕ, тараватлăхĕ кашни ачана хăпартлантаратчĕ, вĕренӳре çитĕнӳсем тума пулăшатчĕ. Тавах, Анисия Александровнăна! Вĕренӳ çине нихăçан та сӳрĕк пăхман эпĕ. Вĕрентекен пирĕншĕн Турă пекех шутланнă, çавăнпа та уроксенче тимлĕ пулнă. Киле парса янă ĕçсене те кăмăлтан пурнăçланă. Атте-анне сăмахĕнчен нихăçан та иртмен. Е тата çуллахи каникул хаваслăхпа асра юлатчĕ. Хĕртсе пăхакан хĕвеллĕ кунсенче аслисемпе тан колхозра ĕçленĕ. Ҫав вăхăтрах кĕтӳ кĕтнĕ, утă çулнă, вутă çурнă. Алла çава, пуртă тытса ĕçленĕрен ал тупанĕсем хĕрелсе тăртанатчĕç, хулпуççисем тĕлкĕшетчĕç. Ҫакнашкал ывăннă хыççăн утă купи çине тӳнсе кайса канма пит аванччĕ. Ҫав самантра шăм-шака ытарайми канлĕ туйăм çавăрса илетчĕ. Ҫӳлте кăн-кăвак пĕлĕт пурçăн евĕр йăлтăртататчĕ, ылтăн хĕвел ялкăшса çунатчĕ. Ҫапах та хуçалăхри йывăртарах ĕçсене пурнăçланăран хул-çурăм çирĕпленнĕ çеç, – терĕ вĕренекенсене.

4 «б» класра вĕренекен Семен Игнатьевăн сăвви те итлекеншĕн кăмăллă пулчĕ.

Хура лаша юрттарать,
Инçе çула вăлваскать,
Пирĕн пек вĕтĕр-шакăра
Ярăнтарма хыпаланать...

Ку йĕркесем вара Владимир Ильича шухăша ячĕç. Ара, вăл аслă классенче инçе çула кĕскетсе Шăхасана вĕренме çӳренĕ-çке. Канаш районĕнчи Матьшӳ ялĕнче тăхăр ачаллă çемьере кун çути курнă икĕ енлĕ йĕлтĕр спорчĕн тĕнче класлă спорт мастерĕ Владимир Ильич асаилĕвне те çамрăксем хаваспах итлерĕç.

– Анчах лашапа мар, урана йĕлтĕр сырса васкаттăм пĕлӳ çуртне. Ачаранах йĕлтĕрпе чупма юратнăран хĕллехи шартлама сивĕ те хăратмастчĕ. Йĕлтĕрĕ манăн чаплах марччĕ паллах, аттепе аннен ачи нумай пулнăран мĕн кирлине йăлтах илсе парайман-çке. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне районти ăмăртăва сунарçă йĕлтĕрне сырса хутшăнтăм, апла пулин те ыттисене кая хăварса финиша пĕрремĕш çитрĕм. Ҫак çитĕнӳ хыççăн шкултан йĕлтĕр парнелерĕç. Ку маншăн виçесĕр савăнăç пулчĕ. Мана никам та спорт вăрттăнлăхне вĕрентмен, эпĕ хамах тапса тăракан пултарулăхăма аталантарма тăрăшнă.




Атте-анне вара яланах ырă тĕслĕх парса, ĕçе юратма, тĕрĕс пурăнма, çынна хисеплеме хăнăхтарнă, тарăн пĕлӳ илме пулăшнă. Ачасем, сире те ыррине çеç сунатăп. Мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕр тесен шав малалла ăнтăлмалла, йывăрлăх умĕнче пуçа усмалла мар, – çирĕплетрĕ Владимир Ильич.

«Тăван çĕршыв ывăлĕсем» организаци членĕсем Шăхасан шкулĕнчи чи хастар вĕрентекенсемпе вĕренекенсене парнесемпе савăнтарчĕç. Шкул библиотекине те пуянлатса хăварчĕç. Ҫавăнтах Геннадий Александрович Викторов офицерăн Раççей Геройĕсем çинчен çырнă кĕнекисене парнелерĕç. Ĕнтĕ Шăхасан ачисем Йĕпреç районĕнчи Ҫăкалăхра çуралса ӳснĕ, кайран паттăрсен вилĕмĕпе куçне хупнă Леонид Сергеевич Константинов пирки, Канаш районĕнчи Янкăлч ялĕнче кун-çути курнă, халĕ Мускавра пурăнакан Николай Федорович Гавриловпа Чĕмпĕр чăвашĕ Геннадий Григорьевич Ирейкин çинчен тĕплĕнрех вуласа пĕлме пултараççĕ.

Кун пек хаваслă тĕлпулу малашне те пуласса шанаççĕ Шăхасансем.

***Элиза ВАЛАНС.***

Канаш районĕ,
Шăхасан.

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсенче:** Вячеслав Михайлович Ильин полковник юратнă педагогĕпе Анисия Александровна Николаевăпа; Хăнасене савăнтарнă пĕр ушкăн; Эрик Васильевич Васильев полковник: "Шкул музейне парне!".



Тантăш 7
16 №, 2016, ака, 28

# Çухатас килмест ăна



**Лайăх куракан çын япăх кураканнине ăнланмасть çав. Эпĕ вара иккĕмĕшсен инкекне аванах туятăп, хам та вĕсен йышнех кĕретĕп-çке. Анчах куçлăх тăхăнма вăтанатăп – ун пеккисенчен тăрăхлама юратаççĕ. Пурăнатăп çапла тĕтрелле пурнăçра, çынсене аякран палласа илеймесĕр асаплана-асаплана.**

Клуба пурпĕрех çÿретĕпха, хĕр-тантăшсем килте лартмаççĕ. Касçхине вара куç çивĕчлĕхĕ тата вăйсăртарах. Юлташсенчен çĕтсе юласран çав тери хăратăп. Кайран вĕсене мĕнле тупасси пăшăрхантарать. Акă алăкран тухнă чухне пĕрле вĕренекен хĕрачана куртăм та: «Салам, Ирина!» – терĕм хавассăн. «Ай-уй, эпĕ сана пасăрах алă султăм-çке», – тет вăл кулакулах. Аван мар лару-тăрăва кĕрсе ÿкнĕшĕн пит пĕçере пуçларĕ. Часчасах çапла. Тепĕр чухне нумайăшне пăтраштаратăп. Çавăнпа та часчасах пуçа чиксе çÿреме тăрăшатăп: ун пек чухне çынсем мана аякран алă сулмĕç, сывăха пырса сăмах хушĕç – вара эпĕ вĕсене палласа илетĕпех.

Акă ĕнтĕ клубра хаваслă кĕвĕ янăрать, хĕр-тантăшсем ташлам пекки туса тăраççĕ. Эпĕ те вĕсем пек хăтланкалама тăрăшатăп. Çамрăксем чылайăн пуçтарăннă, палламаннисем те нумай. Сасартăк пĕр каччă мана сăнанăн туйăнчĕ. Çук пуль, туйăнчĕ кăна пуль. Анчах çакна тантăшăмсем те асăрханă иккен: кулакула пăшăл пăтти пĕçерме тытăнчĕç. «Лайăххах ташла, сана пĕр каччă килĕштерсе пăрахнă», – терĕ Маша. Куç япăх курать пулин те йăнăшмарăм иккен. Ташлама-и унта? Пĕтĕм кĕлетке хытса ларчĕ, ман çине кам та пулин пăхнине туйсан тарса çухалас килет. Чее юлташсем пĕччен хăварса уçăлма тухасшăнччĕ, чăрмантарасшăн мар имĕш. Анчах вĕсенчен пурпĕрех юлмарăм. Хайхи каччă та пирĕн хыççăнах тухрĕ.

Паллашрăмăр. Митя мана киле те ăсатса ячĕ. Телефон номерĕсемпе ылмашăнтăмăр. Тепĕр шăматкун та тĕл пулма калаçса татăлтăмăр.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Митя шăнкăравларĕ те хăй клубра иккенне пĕлтерчĕ. Юлташсемпе хăнăхнă çула такăрлатрăмăр. Акă ташă касĕ хĕрсе пынă çĕре çитрĕмĕр. Анчах пĕр кăлтăк пур: эпĕ Митьăн сăнне ас тумастăп. Хăй пырса калаçасса шанса сак çине кайса лартăм. Чăн та, нумай кĕттермерĕ вăл. Ман пата сывхарсанах унăн сăнне аса илтĕм. Эх, куç япăх курнăшăнах çынсен сăнĕсене асра хăвараймастăп пуль…

Пĕр кунхине шухăшларăм-шухăшларăм та çакăн пек йышăну турăм: куçлăх тăхăннишĕн кăна çынна епле тиркеме пулать-ха? Эпĕ хама мĕнле тыткалани пĕлтерĕшлĕрех пулĕ. Шкула куçлăхпа пырса кĕрсен пĕрле вĕренекенсем манпа хутшăнма пăрахĕç-ши е нимĕн те улшăнмĕ-ши? Тĕрĕслесе пăхмалла.

Акă эпĕ куçлăхпа пыратăп. Тĕнче çуталнăн туйăнать. Çынсем ман çине мĕнле пăхнине те аван куратăп. Мĕн чухлĕ япалана асăрхаман иккен эпĕ малтан. Класа кĕтĕм те – ачасем ман çине сăмах чĕнмесĕр пăхса лараççĕ. Хама ним пулман пек тытма тăрăшатăп. Акă пĕри те тепри ман паталла пуçтарăна пуçларĕç. «Санăн куçлăху мĕнле хитре», – тет пĕри. «Сана питĕ килĕшет», – палăртать тепри. «Парха, тăхăнса пăхам», – тархаслать виççĕмĕшĕ. Пĕри те кулмарĕ. Ахалех кулянса пурăннă иккен эпĕ.

Тепрехинче клуба та куçлăхпах тухрăм.

«Имидж улăштарас терĕн-и, – тĕлĕнчĕ Митя мана курсанах. – Кун пек тата илемлĕрех-çке». «Çук, – хирĕçлерĕм эпĕ. – Манăн куç япăх курать. Çавăн пек япăх ен пур». Çакна каланă хыççăн Митя ман çине урăхларах пăхĕ, калаçма пăрахĕ пулĕ тенĕччĕ. Йăнăшрăм. «Пĕлетĕн-и, халь нимшĕн те кулянмалла мар. Тухтăрсем япăх куракан куçа та сиплеме пултараççĕ, – терĕ вăл ăшшăн. – Чул чĕреллĕ çынна çеç пулăшаймаççĕ пуль вĕсем. Эсĕ ав епле ырă кăмăллă».

Митя сăмахĕсем чуна ăшăтрĕç. Çапла пирĕн туслăх пĕчĕккĕн вăй илсех пычĕ. Çакăн пек лайăх каччăна çухатас килмест.

*Лада МАРКИЗОВА.*

◈ ЧУНРИ

Çак çырăва çырас теменччĕ. Хĕтĕртекенни акă мĕн. Эпĕ хальхи пурнăçпа пачах килĕшместĕп. Халь кăна мар, тахçан авал та пулнă çавăн пекех. Телее кашни хăйне май ăнланать. Анчах кашниех телейлĕ пулаймасть. Çавăнпа та килĕшместĕп эпĕ пурнăçпа.

Хама чи телейлисен шутĕнче теместĕп. Халĕ эпĕ вун улттăра. Анчах юрату мĕнне пĕлетĕп. Мана Л. ятлă хĕр килĕшет. Ăна эпĕ питĕ юрататăп. Уншăн тем тума та хатĕр. Ăна аса илмесĕр пĕр кун та, пĕр сехет те иртмест. Яланах куç умĕнче вăл. Тĕлĕкре те тĕлленетĕп. Анчах темшĕн вăл манăн туйăма ăнланмасть. Тен, халĕ те эпĕ ăна юратнине пĕлмест? Эпĕ ăна çав-çавах кĕтетĕп. Кĕтсе илессе шанатăп.

Л., эпĕ сана питĕ хытă юрататăп! Енчен те эсĕ çак çырăва вулатăн пулсан, манăн туйăмсене ăнлансам. Кĕтетĕп сана, савниçĕм!

*Телейсĕр Коля.*

# Илемлĕ кулă, çăра та хура куç харшийĕ…



Эпĕ сăпайлă хĕрача, шкулта лайăх вĕренетĕп. Вăл вара – ашкăнчăк та пуçтах арçын ача, шкула пĕр тетрадьпе кăна çÿрекенскер. Мĕн килĕшетши мана унра, пĕлместĕп. Тен, илемлĕ кулли… Тен, çăра та хура куç харшийĕ… Тен, унăн харсăрлăхĕ? Ăнлантарса пама йывăр.

Манăн ăна ялан мĕнпе те пулин пулăшас, хама асăрхаттарас килет. Унпа калаçнă кашни самант – телей. Анчах туятăп, Димăна ман пек хĕрачасем кăсăклантармаççĕ. Çавăнпа кăмăллана арçын ачан сăнĕпе вăрттăн киленмелли, кăштах та пулин калаçма сăлтав шырамалли, мĕнпе те пулин пулăшмалли çеç юлать.

Туять-ши вăл эпĕ хăйне килĕштернине? Çук пуль. Анчах вăл килти ĕçсене манран çырса илме ыйтсан хирĕçлеместĕп, савăнатăп çеç. Эх, мĕн тери телейлĕ туятăп хама çавăн пек чухне!

Пĕррехинче физкультура урокĕнче футболла выляттăмăр. Эпĕ Димăпа пĕр командăраччĕ. Мечĕке тĕрĕс мар тапрăм пулмалла та «чĕрем хуçи» – çав илемлĕ кулăллă, çăра та хура куç харшиллĕ харсăр каччă – тарăхса кăшкăрма тытăнчĕ. Эпĕ командăри чи япăх вăйăçă тейĕн. Питĕ кÿрентĕм. Нимĕн калайманнипе мечĕке тытрăм та Дима çинелле тапрăм – шăп çамкинчен лектертĕм! Пĕлтĕр-ха вăл сăпайлă хĕрачасене мĕнле кÿрентермеллине.

Çакăн хыççăн Димăпа калаçма пăрахрăм, тетрадьсенчен те текех çыртарса илтерместĕп. Мĕне кирлĕ унăн илемлĕ кулли, çăра та хура куç харшиллĕ тата чăтмалла мар харсăрлăхĕ вăл хăйне йĕркеллĕ тытма пĕлмест пулсан?

*Ксения БЕЛОВА.*

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

16-17 çулсенчи ĕçчен те ырă чунлă, илемлĕ хĕрпе паллашас кăмăл пур.

*Саша. 8-999-790-41-41.*

## ĂСЛĂ КАЛАНĂ

❁Ачасем – ашшĕ-амăшĕн тĕкĕрĕ мар-и вара?

*«Аслисем».*

❁Ăслă çамрăксем тата айван ватăсем пулма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен шухăшлама пире вăхăт мар, пĕчĕклех илнĕ воспитани тата çут çанталăк вĕрентет.

*Демокрит.*

❁Кирек епле çĕршывра та çамрăк ăру ют çĕршыв çыннисемпе тан.

*Мадам де Сталь.*

❁Тĕпрен илсен, чылай пысăк япалана çамрăксем ăсталанă.

*Бенджамин Дизраэли.*

❁Çамрăксем тĕнчене хăйсен кумирĕсен куçĕпе кураççĕ.

*В.Швебель.*

❁Ватăсене хисеплемен çĕрте те, çамрăксене юратман вырăнта та общество йĕркеленсе çитмен.

*Андре Моруа.*

❁Çамрăксем пурлăхпа кăсăкланни хĕрхенÿ çуратать. Пурлăх çинчен кăна шухăшлакан яваплăх туйăмне пĕлмест. Яваплăх туйăмĕсĕр çыннăн вара чыс та çук.

*Ямамото Цунэтомо. Хагакурэ.*

❁Çамрăксем кил-çурта тĕкĕрсемпе илемлетеççĕ, ватăсем – ÿкерчĕксемпе.

*Чак Паланик.*

❁Çамрăк чухне аталанманнине пурнăç тăршшĕпе те аталантараймастăн.

*Д.Писарев.*

❁Çамрăклăх васкаса пĕтĕмлетессипе палăрса тăрать. Çакна пула час-часах «тĕнчере пĕтĕмпех суя» текен шухăш çуралать. Тĕрĕссипе вара, хăш-пĕр япала кăна суя.

*Г.Хаггард.*

❁Вун тăваттăра чухне аттен чăтмалла мар айванлăхĕнчен тĕлĕнеттĕм, анчах çирĕм пĕр çула çитсен вăл епле хăвăрт ăслăланни маншăн асамлăх пекчĕ.

*Марк Твен.*

# Пуçватмăшсем



1. Çурăм хыçĕнчи хутаç. 2. Мал ĕмĕтлĕ çын. 3. Свердловск облаçĕнчи хула. 4. Тĕнчери чи пысăк стадион. 5. Муркаш районĕнчи ял. 6. Музыка терминĕ. 7. Авалхи грексен юмахĕ. 8. Килти пĕчĕк кăмака.



**Хĕрринчен варринелле:** 1. Гипотенуза юлташĕ. 2. Тарзанăн ярăнчăкĕ. 3. Йывăç. 4. Украинăри çурт. 5. Икĕ вĕçлĕ япала. 6. Ăна шакла пуç тăхăнать. 7. Пўрт пайĕ. 8. Вăл спектакль пуласса пĕлтерет.

**Сехет йĕппи майлă:** 9. Боксер çапкаланса тăни. 10. Поэтсен тăвĕ. 11. Красноармейски районĕнчи ял. 12. Пĕтĕм халăхпа туслă çын.



1. Пĕлтĕрхи çул палли. 2. ... кĕперĕ. 3. Хырăмĕ пур, çурăмĕ çук /туп. юм./. 4. М. Федоров хайланă баллада. 5. Чăваш сăвăçи, вилĕмсĕр «Нарспи» поэма авторĕ. 6. Çут çанталăк «ўпки». 7. Çурçĕрти пулă. 8. Авалхи скифсен хĕçĕ.



1. Вĕçенкайăк. 2. Кил ăшши. 3. ... кĕперĕ. 4. Тинĕс пулли. 5. Вырăсла капкăн. 6. Сăвăçсен сăваплă тĕвĕ. 7. Суворовăн малтанхи çар званийĕ. 8. Ăна пуçа тăхăнаççĕ. 9. Ун çине ямшăк ларать.

# Сăмах хыççăн сăмах

1. Йывăç пайĕ. 2. Килĕшсе пурăнни. 3. Тăварланă çĕре яракан шĕвек. 4. Токпа çапакан пулă. 5. Кăнтăрти йывăç. 6. Çумăр пĕрчи. 7. Ĕлĕкхи машина. 8. Тăрнаккай /вырăсла/. 9. Хаклă металл. 10. Лупашка вырăн. 11. Тĕнчери чи пысăк стадион. 12. ...-сухра. 13. Ĕç укçин пĕр пайĕ. 14. Санкт-Петербургри хоккей команди. 15. Маугли «амăшĕ». 16. Сусăрлантар. 17. В.Краснов-Асли романĕ. 18. Кăнтăрти шур сухал. 19. Вăл этажсем тăрăх ярăнса çўрет. 20. Çĕнтерўçĕсене халалланă кĕвĕ.

**Ăнлантарни:** Ыйтусене тĕрĕс хуравласан диагональсем урлă тата икĕ сăмах вуласа пĕлме пулать.



# Унталла та кунталла



**Сылтăмалла:** 2. Бас та, тенор та мар. 3. Çурма лаша, çурма çын.

**Çўлтен-аялалла-сылтăмалла:** 1. АЭСри «хуран». 2. Унта шкул ачи мĕнле вĕреннине палăртса пыраççĕ.

**Аялтан-çўлелле-сылтăмалла:** 3. Флот карапĕ. 4. Квинтетран кĕçĕнрех.

*Николай КРАСНОВ*
(Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***